**ЕРЭ -2023**

# 2023 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе паташлăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента тест ыйтăвĕсене хуравлама хатĕрленесси

*Егорова А.С., Чăваш Республикин вĕренӳ институтчĕн чăваш чĕлхипе литературы кафедрин доценчĕ*

## 1-мĕш пай

**1** ***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Изложенири сăмах шучĕ 70-тен кая пулмалла мар.

Изложение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

## 2-мĕш пай

**2-8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифрăсен йĕрки пулма пултарать.**

**2** ***Синтаксис тишкерĕвĕ.***

Текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр.

*(1)Пирĕн шкулта библиотека пур. (2)Вăл иккĕмĕш хутри пысăк пӳлĕмре вырнаçнă. (3)Унта хăтлă та тирпейлĕ, çутă та таса. (4)Эпĕ библиотекăна час-часах çӳретĕп. (5)Юлашки вăхăтра Марина Карягина кĕнекисене вуларăм.*

Предложенисен грамматика никĕсне тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.

1) *библиотека пур* (1-мĕш предложени);

2) *пӳлĕмре вырнаçнă* (2-мĕш предложени);

3) *унта хăтлă та тирпейлĕ* (3-мĕш предложени);

4) *эпĕ çӳретĕп* (4-мĕш предложени);

5) *кĕнекисене вуларăм* (5-мĕш предложени).

**Хуравĕ:** ________________________

**3** ***Пунктуаци тишкерĕвĕ.***

Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.

*Уйăхсем (1) пĕрремĕш юрпа (2) пирĕн пата çитеççĕ (3) вĕсен хĕп-хĕрлĕ кăкăрĕсем (4) сарă кăвак çурăмĕсем (5) хура пуçĕсемпе (6) çуначĕсем (7) шурă юр çинче (8) аякранах курăнаççĕ.*

**Хуравĕ:** ________________________

**4** ***Синтаксис тишкерĕвĕ.***

*Вăрçă нуши-тертне тӳснĕ ват асаннен йывăр шăпи* сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.

**Хуравĕ:** ________________________

**5** ***Орфографи тишкерĕвĕ.***

**Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав вариантсен номерĕсене çырăр.**

1) ***атте-анне*** – икĕ хут калакан сăмахсене дефиспа çырмалла;

© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2022



2) ***икĕ çын*** – япала ятне ăнлантаракан хисеп ячĕсенче пĕр хупă сас палли çырмалла;

3) ***Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ*** – уяв ятĕнче малтанхи сăмахне çеç пысăк сас паллинчен пуçласа çырмалла;

4) ***райхаçат*** – мăшăр сăмахсене пĕрле çырмалла;

5) ***каятчĕ*** – пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсенче 3-мĕш сăпатра пурлă формăра та, çуклă формăра *тч*-па çырмалла.

**Хуравĕ:** ________________________

**Текста вуласа тухăр та 6-9-мĕш ĕçсене тăвăр.**

(1)Учитель… (2)Çак сăмах пуриншĕн те çывăх, хаклă. (3)Учитель кашни ачана пĕлӳ тĕнчин алăкне уçма пулăшать, пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илме, лайăххине усаллинчен уйăрма, тăван халăхшăн усăллă çын пулма вĕрентет. (4)Кашни вĕрентекенех хăйĕн вĕренекенĕсем сапăр та хастар чун-чĕреллĕ çынсем пулччăр тесе тăрăшать, ырă шухăш-ĕмĕтпе пурăнать.

(5)Учитель ĕçĕ – сăваплă ĕç, çав вăхăтрах йывăр та. (6)Ачасене таса чунпа юратакан, хисеплекен, тимлĕ итлеме пĕлекен çын кăна учитель ятне тивĕç. (7)Унăн тĕп тĕллевĕ – ачасене вĕренӳре ĕлкĕрсе пыма, ĕçчен, ырă кăмăллă, таса чунлă, çынна инкекре пулăшма, çын ĕçне хаклама, çут çанталăка упрама, илемлĕхе курма, туйма, чĕр чунсене юратма, аслисене хисеплеме, кĕçĕннисене пулăшма вĕрентесси. (8)Учитель анне пекех: кашни ачан пурнăçĕпе, савăнăçĕ-хуйхипе пурăнать. (9)Кашни вĕренекене хăй ачине юратнă пек юратать, йывăр вăхăтра пулăшать, унпа пĕрле савăнать те, кулянать те.

(10)Учитель – кашни ача шăпинче ырă йĕр хăваракан, кашни ачана унăн ăстăнĕпе кăмăлне çирĕплетсе, пултарулăхне аталантарса пурнăç çулĕ çине кăларакан. *(Лариса Петрова* çырни тăрăх.)*

***Лариса Петрова** (1990) – *чăваш çыравçи, журналисчĕ.*

**6** ***Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ.***

**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?**

1) Кашни вĕрентекенех хăйĕн вĕренекенĕсем сапăр та хастар чун-чĕреллĕ çынсем пулччăр тесе тăрăшать, ырă шухăш-ĕмĕтпе пурăнать.

2) Ачасене таса чунпа юратакан, хисеплекен, тимлĕ итлеме пĕлекен çын кăна психолог ятне тивĕç.

3) Учитель кашни ял çыннин пурнăçĕпе, савăнăçĕ-хуйхипе пурăнать.

4) Кашни вĕренекене хăй мăнукне юратнă пек юратать, йывăр вăхăтра пулăшать, унпа пĕрле савăнать те, кулянать те.

5) Учитель – кашни ача шăпинче ырă йĕр хăваракан, кашни ачана унăн ăстăнĕпе кăмăлне çирĕплетсе, пултарулăхне аталантарса пурнăç çулĕ çине кăларакан.

**Хуравĕ:** ________________________

**7** *Илемлĕх мелĕсене тишкерни.*

**Танлаштаруллă предложени(сен) номерне кăтартăр.**

(1) Çак сăмах пуриншĕн те çывăх, хаклă.

(2) Кашни вĕрентекенех хăйĕн вĕренекенĕсем сапăр та хастар чун-чĕреллĕ çынсем пулччăр тесе тăрăшать, ырă шухăш-ĕмĕтпе пурăнать.

(3) Учитель ĕçĕ – сăваплă ĕç, çав вăхăтрах йывăр та.

(4) Ачасене таса чунпа юратакан, хисеплекен, тимлĕ итлеме пĕлекен çын кăна учитель ятне тивĕç.

(5) Учитель анне пекех: кашни ачан пурнăçĕпе, савăнăçĕ-хуйхипе пурăнать.

**Хуравĕ:** ________________________

**8** *Лексика тишкерĕвĕ.*

*Савăнать* сăмахăн (9-мĕш предложени) антонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ:** ________________________

**2-8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

**3-мĕш пай**

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1** **«Тавах Сире, вĕрентекен!»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентерĕр: пĕр тĕслĕхне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхе предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2022



**9.2** Вуланă текстра палăртнă **«Учитель – кашни ача шăпинче ырă йĕр хăваракан, кашни ачана унăн ăс-тăнĕпе кăмăлне çирĕплетсе, пултарулăхне аталантарса пурнăç çулĕ çине кăларакан»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентерĕр: Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхсене предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Енчен те эсир экзаменра вуланă текста ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**9.3** ***Вĕрентекен*** тенине Эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Кам вăл вĕрентекен?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тезис вырăнне Хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) усă курăр: пĕр тĕслехне вуланă текстран, теприне Хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхе предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан – ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2022

# 2-мĕш пай

**2-8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифрăсен йĕрки пулма пултарать.**

2-мĕш пайăн 2-8-мĕш ĕçĕсене **тĕрĕс** тусан шкул ачи кашни ĕçшĕн 1-ер балл илет.

Хурав **тĕрĕс пулмасан** е **вăл пачах пулмасан** – 0 балл лартаççĕ.

**2-мĕш пайăн 2-8-мĕш ĕçĕсене тĕрĕс тусан пĕтĕмпе 7 балл пухма май пур.**

## 2 | Синтаксис тишкерӗвӗ.

Текста тӗплӗ, васкамасӑр вуласа тухӑр.

***(1)Пирӗн шкулта библиотека пур. (2)Вӑл иккӗмӗш хутри пысӑк пӳлӗмре вырнаҫнӑ. (3)Унта хӑтлӑ та тирпейлӗ, ҫутӑ та таса. (4)Эпӗ библиотекӑна час-часах ҫӳретӗп. (5)Юлашки вӑхӑтра Марина Карягина кӗнекисене вуларӑм.***

Предложенисен грамматика никӗсне тӗрӗс палӑртнӑ вариантсене кӑтартӑр.

***1) библиотека пур*** **(1-мӗш предложени);**
***2) пӳлӗмре вырнаҫнӑ*** **(2-мӗш предложени);**
***3) унта хӑтлӑ та тирпейлӗ*** **(3-мӗш предложени);**
***4) эпӗ ҫӳретӗп*** **(4-мӗш предложени);**
***5) кӗнекисене вуларӑм*** **(5-мӗш предложени).**

**Хуравӗ: ___________________________**

## 3 Пунктуаци тишкерĕвĕ.

Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.

***Уйăпсем (1) пĕрремĕш юрпа (2) пирĕн пата çитеççĕ (3) вĕсен хĕп-хĕрлĕ кăкăрĕсем (4) сарă кăвак çурăмĕсем (5) хура пуçĕсемпе (6) çуначĕсем (7) шурă юр çинче (8) аякранах курăнаççĕ.***

***Хуравĕ: ___________________________***

| 3 | | Синтаксис тишкерĕвĕ. |
|---|---|---|

***Вăрçă нуши-тертне тӳснĕ ват асаннен йывăр шăпи*** **сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.**

***Хуравĕ:*** ______________________________

| 4 | | Орфографи тишкерĕвĕ. |
|---|---|---|

1) ***атте-анне*** – икĕ хут калакан сăмахсене дефиспа çырмалла;
2) ***икĕ çын*** – япала ятне ăнлантаракан хисеп ячĕсенче пĕр хупă сас палли çырмалла;
3) ***Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ*** – уяв ятĕнче малтанхи сăмахне çеç пысăк сас паллинчен пуçласа çырмалла;
4) ***райхаçат*** – мăшăр сăмахсене пĕрле çырмалла;
5) ***каятчĕ*** – пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсенче 3-мĕш сăпатра пурлă формăра та, çуклă формăра *тч*-па çырмалла.

***Хуравĕ:*** ______________________________

# Текста вуласа тухăр та 6-9-мĕш ĕçсене тăвăр

*(1)Учитель… (2)Çак сăмах пуриншĕн те çывăх, хаклă. (3)Учитель кашни ачана пĕлӳ тĕнчин алăкне уçма пулăшать, пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илме, лайăххине усаллинчен уйăрма, тăван халăхшăн усăллă çын пулма вĕрентет. (4)Кашни вĕрентекенех хăйĕн вĕренекенĕсем сапăр та хастар чун-чĕреллĕ çынсем пулччăр тесе тăрăшать, ырă шухăш-ĕмĕтпе пурăнать. (5)Учитель ĕçĕ – сăваплă ĕç, çав вăхăтрах йывăр та. (6)Ачасене таса чунпа юратакан, хисеплекен, тимлĕ итлеме пĕлекен çын кăна учитель ятне тивĕç. (7)Унăн тĕп тĕллевĕ – ачасене вĕренӳре ĕлкĕрсе пыма, ĕçчен, ырă кăмăллă, таса чунлă, çынна инкекре пулăшма, çын ĕçне хаклама, çут çанталăка упрама, илемлĕхе курма, туйма, чĕр чунсене юратма, аслисене хисеплеме, кĕçĕннисене пулăшма вĕрентесси. (8)Учитель анне пекех: кашни ачан пурнăçĕпе, савăнăçĕ-хуйхипе пурăнать. (9)Кашни вĕренекене хăй ачине юратнă пек юратать, йывăр вăхăтра пулăшать, унпа пĕрле савăнать те, кулянать те. (10)Учитель – кашни ача шăпинче ырă йĕр хăваракан, кашни ачана унăн ăс-тăнĕпе кăмăлне çирĕплетсе, пултарулăхне аталантарса пурнăç çулĕ çине кăларакан.* (Лариса Петрова çырни тăрăх.)

| 6 | | Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ. |
|---|---|---|

***Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?***

*1) Кашни вĕрентекенех хăйĕн вĕренекенĕсем сапăр та хастар чунчĕреллĕ çынсем пулччăр тесе тăрăшать, ырă шухăш-ĕмĕтпе пурăнать.*

*2) Ачасене таса чунпа юрататакан, хисеплекен, тимлĕ итлеме пĕлекен çын кăна психолог ятне тивĕç.*

*3) Учитель кашни ял çыннин пурнăçĕпе, савăнăçĕ-хуйхипе пурăнать.*

*4) Кашни вĕренекене хăй мăнукне юратнă пек юрататать, йывăр вăхăтра пулăшать, унпа пĕрле савăнать те, кулянать те.*

*5) Учитель – кашни ача шăпинче ырă йĕр хăваракан, кашни ачана унăн ăс-тăнĕпе кăмăлне çирĕплетсе, пултарулăхне аталантарса пурнăç çулĕ çине кăларакан.*

***Хуравĕ:*** ______________________________

| 7 | | Илемлĕх мелĕсене тишкерни. |
|---|---|---|

***Танлаштаруллă предложени(сен) номерне кăтартăр.***

*(1) Çак сăмах пуриншĕн те çывăх, хаклă.*

*(2) Кашни вĕрентекенех хăйĕн вĕренекенĕсем сапăр та хастар чун-чĕреллĕ çынсем пулччăр тесе тăрăшать, ырă шухăш-ĕмĕтпе пурăнать.*

*(3) Учитель ĕçĕ – сăваплă ĕç, çав вăхăтрах йывăр та.*

*(4) Ачасене таса чунпа юратакан, хисеплекен, тимлĕ итлеме пĕлекен çын кăна учитель ятне тивĕç.*

*(5) Учитель анне пекех: кашни ачан пурнăçĕпе, савăнăçĕ-хуйхипе пурăнать.*

***Хуравĕ:*** ___________________________

## 8 Лексика тишкерĕвĕ.

***Савăнать*** **сăмахăн (9-мĕш предложени) антонимне текстра тупса çырăр.**

***Хуравĕ:*** ______________________________

**2-8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнне тепĕр хут пăхса тухăр.**

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 2 | 14<е>41 |
| 3 | 345<е>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 4 | йывăр шăпи |
| 5 | 23<е>32 |
| 6 | 15<е>51 |
| 7 | 5 |
| 8 | кулянать |



# Вăхăтпа пĕлсе усă курăр!

Ĕçĕн иккĕмĕш пайне тума **40** минут уйăраççĕ. Çак вăхăтра иккĕмĕш (вуланă) текста тимлĕ вуласа тухмалла, пĕрремĕш (итленĕ) текстпа танлаштармалла тата тест ыйтăвĕсене хуравламалла.

# *Экзаменра ăнăçу сунатпăр!*